# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

61 (8628) № * Шăматкун, 2018 çулхи çурла (август) уйăхĕн 18-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

# Тулли пыл чĕресĕ – уяв илемĕ

Çĕнĕ технологисем вăй илнĕ вăхăтра сывлăх нихăçанхинчен ытларах малти вырăна тухрĕ. Çакна шутра тытса çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче 2010 çултанпа ырă йăлана кĕнĕ «Сывлăх пыл хурчĕн çунаттисем çинче» республика пĕлтерĕшлĕ Пыл уявĕ Муркашри тĕп лапамра иртрĕ. Асăннă уява иртерессинче муркашсем ытти-семшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнине эпир çуллен хамăр куçпа курса ĕненетпĕр.

Палăртнă вăхăта «Сывлăх» спорт шкулĕ умне утарçăсемпе пыл активме юратакансем йышлă пухăнчĕç. Хаваслă юрă-кĕвĕ уяв сăнне илем кĕртет, таврана хыпар сарса хăнана йыхравлать. Пыл хуртне хăйсен пурнăçĕн пĕлтерĕшĕ туса хунă утарçăсем, вĕсен ĕçне куллен куракан ял çыннисемпе сад ăстисем хамăр тăрăхри ялсенчен те, ытти районпа республика шайĕнчен те йышлăн килсе çитрĕç. Хăнасем хушшинче районти тĕрлĕ шайри ертӳçĕпе пĕрлех Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ В. Петров, «Хурт-хăмăр ĕрчетес агентство» уçă акционер обществин генеральнăй директорĕ Г. Максимов пулчĕç.

Палăртнă вăхăтра уява район пуçлăхĕ И. Николаев уçрĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче хурт-хăмăр отраслĕ ял хуçалăх аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине, утарçăсен ĕçне уйрăм вицепе хакламаллине, вĕсене тивĕçлипе чысламаллине палăртрĕ.

ЧР гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ В. Петров республикăри чи тутлă та пылак уяв Муркашра пулнишĕн хĕпĕртенине пĕлтерчĕ. «Хурт-хăмăр туслă ĕçленĕ пек эсир те çак уява йăларан кăлармасса шанатăп», – терĕ Вениамин Иванович. Кун хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Миронов уява пухăннисене саламласа хастар утарçăсен пысăк йышне район администрацийĕн Тав хучĕсемпе чысларĕ. «Хурт-хăмăр ĕрчетес агентство» уçă акционер обществин генеральнăй директорĕ Г. Максимов района пурăнакансене хурт-хăмăрпа татах та туслăрах пулма ăнăçу сунчĕ.

Пыл – сывă апат-çимĕç никĕсĕ. Вăл çыннăн пурнăçне тăсать, сывлăх парать, пысăк ĕçсем тума хавхалантарать. Çак шайран пăхсан пыл хурчĕпе вăл паракан продукцин пахалăхне нимĕнле тарасапа та виçме çук.

Çӳлерех каланисене республикăра тăххăрмĕш хут иртнĕ «Сывлăх пыл хурчĕн çунаттисем çинче» ятлă Пыл уявĕ кашни утăмрах кăтартса пачĕ. Уява тĕрлĕ ял тăрăхĕнчен 27 утарçă килсе çитрĕ. Вĕсене пулăшса уявра кашни ял тăрăхĕнченех художество пултарулăх коллективĕ пулчĕ. Вĕсем хушшинче 87 çулхи утарçă Н. Данилов (Чуманкасси ял тăрăхĕ), Муркашри В. Иванова И. Тимофеев, Хорнуйĕнчи Феклăпа Николай Смирновсем, Кораккассинчи Альбинăпа Николай Кондратьевсем, Анаткас Апашри Р. Семенов, Мăн Шашкарти Верăпа Владимир Матвеевсем, Ильинка ял тăрăхĕнчи Тамарăпа Владимир Мерловсем, Катькасри Н. Андреевăн династийĕ, Оринин ял тăрăхĕнчи Г. Крысин т. ыт. те.



– Пыл хурчĕпе хутшăннинчен канлĕреххине тĕл пулаймарăм. Пĕтĕм çемйипех çак ĕçе аталантарассишĕн тăрăшатпăр. Ĕмĕтленни пурнăçлансан пĕрле савăнатпăр, – терĕ кĕске калаçура Н. Кондратьев. Çакăнта никĕсленет ĕнтĕ вăл утарçăн пĕтĕм ăсталăхĕ, вăл хăйĕн ĕçĕ çине çиччĕ виçсе пăхни, кӳршĕ килсе тухса парасса кĕтменни.

Уяв пыл пахалăхĕпе иртерне конкурса тата художество пултарулăх ушкăнĕсен ĕçне пĕтĕмлетнипе вĕçленчĕ. Утарçăсем хушшинче иртернĕ «2018 çулхи чи паха пыл» конкурсра сумлă жюри Муркашри Иван Алексеевич Тимофеев çĕнтерни тесе йышăнчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Кораккассинчи Николай Семенович Кондратьев, виççĕмĕшĕ – Оринин ял тăрăхĕнчи Георгий Яковлевич Крысин. Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Шарпашри Геннадий Валентинович Клементьев утарçă хавхалантару парнине тивĕçрĕ.

Кун хыççăн уява килнисене ташă-юрăпа савăнтарнă коллективсен пултарулăхне пĕтĕмлетрĕç. Çакăнпа уявăн кăнтăрлахи программи вĕçленчĕ.

**А. БЕЛОВ**



**Сăн ӳкерчĕксенче:**

**сулахайран сылтăмалла: «2018 çулхи чи лайăх пыл» конкурс çĕнтерӳçипе Иван Тимофеевпа (Муркаш ял тăрăхĕ) конкурсра хавхалантару парнине тивĕçнĕ Геннадий Клементьев (Чуманкасси ял тăрăхĕ);**

**Катькасра пурăнакан Андреевсен хурт-хăмăрпа ĕçлекен çемье династине куратăр (сулахайран сылтăмалла): династи пуçĕ Николай Васильевич, Алексей ывăлĕ, Елена кинĕ, Анастасия аслă хĕрĕ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Район уй-хирĕсенче

# Кĕр аки пуçланчĕ

**Районĕпе ĕнерхи куна тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 4581 гектар çинче вырса çапнă. Ку вăл планпа пăхнин 35,9 процентĕ пулать. Пĕтĕмпе 12429 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Хальлĕхе тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 27,1 центнерпа танлашать.**

**Пĕтĕмĕшле илсен, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кĕрхи культурăсене пухса кĕртсе пĕтернĕ. Çурхи культурăсем пулса çитнĕ май ĕçсем ку пусăсенче пуçланчĕç. Суворов яч. хис. хуçалăхра 240 гектар, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 220 гектар, Ильич яч. хис. хуçалăхра 83 гектар çинче урпа вырса çапнă ĕнтĕ. Районĕпе ăна 714 гектар çинчен (17,2 процент) пухса илнĕ. «Агро» КМК сĕлĕ вырать.**

**Кĕр аки ирттерме 6250 гектар çĕр хатĕрлесе хăварнă. Ку вăл планпа пăхнин 88,6 процентĕ. Кĕрхи культурăсене пĕтĕмпе 410 гектар акнă. Суворов яч. хис. хуçалăхра (200 гектар), А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче (100 гектар) ака ĕçĕсем кал-кал пыраççĕ. Ильич яч. хис. хуçалăхра та кĕр аки ĕçĕсем пуçланнă.**

**А. Толстовăн тата В. Отеновăн хресен (фермер) хуçалăхĕсенче пахча çимĕç пухса кĕртме тытăннă.**

**Ильич яч. хис. хуçалăхра 75 гектар çĕртме сухи тунă.**

**Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем те чарăнса ларман. Нумай çул ӳсекен курăксене 6565 гектар çинчен çулса пуçтарнă. Ку вăл планпа пăхнин 97,3 процентĕ пулать. Пĕр çул ӳсекен курăксене 663 гектар çинчен çулса кĕртнĕ.**

**Утă пĕтĕмпе 6060 тонна (80,3 процент) типĕтсе янтăланă, сенаж 16550 тонна (113,2 процент), силос 3800 тонна (23,2 процент) хывса хăварнă, 45 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ аврнă. Мăйракаллă шултра выльăха хĕл каçарма условнăй пĕр пуç валли 20,3 центнер апат единици хатĕрленĕ.**

Республикăра

# Крета Валицкая – тĕп хулан хисеплĕ гражданинĕ

Августăн 16-мĕшĕнче, республикăн тĕп хулин çуралнă кунĕ умĕн, Шупашкар хулин администрацийĕнче Крета Валицкаяна «Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ» ята тивĕçнипе чысларĕç.

Пирĕн сумлă та хастар ентеш республика шайĕнче чылай çул тĕрлĕ орган ертӳçинче тăрăшнă, вăл шутра Чăваш Республикин ĕç тата ĕçлев министрĕнче, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнче тимленĕ.

Ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлекен ертӳçĕ Мухтав монументне тата ытти объект тăвассине, хула инфраструктурине аталантарассине пысăк тӳпе хывнă. Обществăлла организацисемпе, пĕрлешӳсемпе килĕштерсе ĕçлесси çине тимлĕх уйăрнă тата ытти те.

Ĕçне кура – хисепĕ. Хулапа республика умĕнчи сумлă та тухăçлă ĕçсемшĕн Крета Лазаревнăна тĕрлĕ медальпе орден, Хисеп грамоти, хисеплĕ ят парса чысланă.

Районта

# Сывлăх кунĕ

Чăваш Республикин Спорт министерстви пуçарнипе 2013 çулта Сывлăх кунне кварталта пĕр хутчен ирттернĕ. Тепĕр çултанпа вара ăна республика пуçлăхĕн указĕпе килĕшӳллĕн уйăхсерен ирттерме пуçланă. Çавна май республикăра пурăнакансем Сывлăх кунĕсенче спорт объекчĕсене тӳлевсĕр çӳреме пултараççĕ. Çак кун çынсем спорт учрежденийĕсенче уйрăмах йышлă пулни курăнать. Черетлĕ Сывлăх кунĕ паян, августăн 18-мĕшĕнче, иртет. Аса илтерни ытлашши пулмĕ, малашне çак кун сентябрĕн 22-мĕшĕнче, октябрĕн 20-мĕшĕнче, ноябрĕн 17-мĕшĕнче, декабрĕн 15-мĕшĕнче пулĕ.

# «Салам» – Куславккара

Çак кунсенче Куславккара пысăк йыш пухăннă. Унта «Играй, гармонь, звени, частушка – 2018!» ятпа фестиваль-конкурс иртнĕ. Ăна Петр Шоркин пултарулла хут купăсçă 85 çула çитнине халалланă.

Асăннă фестивале пирĕн районти Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнчи «Салам» ушкăн (художество пултарулăх ертӳçи В. Ильдяков) та хутшăннă. Халăх кăмăллакан конкурс тĕрлĕ ӳсĕмри юрăçсене, хут купăсçăсене пухнă. Пĕтĕмпе 30 конкурсант хăйĕн ăсталăхĕпе паллаштарнă. Вĕсен йышĕнче муркашсем хăйсене тивĕçлĕ шайра кăтартнă. Тренккăсем вокал ăсталăхĕнче 1-мĕш степень лауреачĕ пулнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

**26 АВГУСТА – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**
**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом.
2-2.

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ĕçлекен пенси çулне пăхмасть



Т. Терентьева пенси çулне пăхмасăрах куллен ĕçре.

Черетлĕ информаци кунĕнче Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева ертсе пыракан ушкăн Чуманкасси ял тăрăхне çитрĕ.

Ялта пурăнакан ĕç пăрахса хăйне е ял çыннисене хумхантаракан ыйтусемпе тĕрлĕ шайри пуçлăх патне тăтăш çӳреймест. Уйрăмах çулла тата кĕркунне. Çакна Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче те лайăх ăнланаççĕ. Умри ĕçсене – выльăх апачĕ янтăлассине, вырма иртерессине, кĕртрисене вăхăтра акса хăварассине – хăйсем пурнăçламасан, вĕсене никам та туса парас çуккине исетерккĕсем аван ăнланаççĕ. Çакна шута илсе Чуманкасси ял тăрăхĕнче вырăнти специалистсемпе, ял тăрăхĕн депутачĕсемпе, культура тата вĕрентӳ ĕçченĕсемпе ирттернĕ тĕл пулу хыççăн ĕç ушкăнĕ Отарккă йĕтемĕ çинче ĕçлекенсемпе тĕл пулма васкарĕ.

Вырăна çитсен хуçалăх ĕçченĕсем малашлăхпа ĕçлесе пурăнни ума туллин тухрĕ. Йĕтем çинче туллиех урпа пулни, тырă алакансем-кĕртекенсем йышлă ĕçлени, вĕсем паянхи ĕçе ырана хăварманни тата малашлăх пирки шутлани – хуçалăхра вырма ĕçĕсем анлă сарăлнин паллисем.

Ĕç калăпăшĕ пирки калас пулсан, кооперативăн механизациленĕ бригади хуçалăхăн уй-хирти пĕтĕм тырă-пулăн çуррине ытла (600 гектар ытла) пуçтарса кĕртнĕ те ĕнтĕ. Кĕрхи культурăсене çапса тĕшĕлес ĕçе вĕçленĕ тырă выракансем тата ăна кĕлетсене кĕртсе хуракансем çуртрисем çине куçнă. Эпир пулнă куна 300 гектар çуртрирен 180 гектарне пуçтарса кĕртнĕччĕ те ĕнтĕ. Хальлĕхе пĕтĕмĕшле вăтам тухăç пĕр гектар пуçне 30 центнерпа танлашать. Телефонпа калаçсан, хуçалăх ертӳçи П. Ефимов çак кăтарту чакмасса шаннине палăртрĕ.

– Çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне вырма валли хатĕрленĕ йĕтем те палăрмаллах тĕкĕ парать. Хуçалăх çакна шута хурса вырмана тухиччен Отарккă йĕтемне сӳтсе çĕнĕрен тăвасси пирки пĕлтерсен, эпир хавaспах ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Çĕнĕ йĕтем айне тырă килме пуçланă çĕре çивитти туса пĕтерсе çĕнĕ çăкăра йышăнма хатĕрлентĕмĕр. Паян-ыран юлнă ĕçсене те вĕçлĕпĕр, – терĕç хуçалăхри вырма кал-кал пынишĕн хĕпĕртенипе çамрăк строительсем.

– Çамрăксем вăй хурса ĕçленине кура пирĕн те алă усса ларас килмест. Йĕтем çинче тырă аланă-кĕртнĕ çĕрте ĕçлекенсен пĕр ушкăнĕ тивĕçлĕ канура пулсан та, пенси çулне пăхмасăр эпир куллен иртен пуçласа каçчен тырă аланă çĕрте. Çапла вара тивĕçлĕ канăва тухмалли çула хушнине çамрăклăха упрама чĕнни пекех туятăп, – терĕ йĕтем çине килекен типĕ тырăпа ĕç хăвăртлăхĕ ӳснишĕн савăнса Тамара Терентьева. 60 çулхи Тамара Николаевна пурнăçран ыррине çеç кĕтнине килти хушма хуçалăха пуян тытни те çирĕ- плетет. Мăшăрĕпе Геннадий Вячеславовичпа вĕсем ĕне те, вăкăр та, чăх-чĕпе сурăхсем те усраççĕ. Çакна ăнăçлă пурнăçласа пыма вĕсем килти хушма хуçалăхри пĕр гектар çĕрпе тухăçлă усă кураççĕ.

Калаçу çак тĕле çитсен информаци ушкăнĕн ертӳçи Р. Кондратьева пенси тытăмĕнчи улшăнусем пирки, пенсие тухмалли вăхăта мĕне пăхса ӳстерни çинчен ăнланмалла каласа пачĕ. Ку темăпа хускатнă ыйтусем çине те вырăнтах ăнланулла хуравсем пачĕ. РФ Пенси фончĕн управленийĕн районти пайĕн ертӳçи Ирина Гришина пенси ыйтăвĕсен пысăк пайне компьютер урлă татса пама ансатрах пулнине тата ăна епле пурнăçламаллине ăнлантарчĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Белов кашни тĕл пулурах ял тăрăхĕнчи лару-тăру çинчен, шăрăх çанталăк тăнине кура пушартан сыхланасси пĕрремĕш тивĕç пулни пирки каласа пачĕ. Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн физкультура секторĕн ертӳçи М. Николаев кашнийĕнех сывă пурнăç йĕрки çине ытларах тимлĕх уйăрмалли, çавăн чухне çеç пуласлăх усăмлă пулни пирки ăнлантарчĕ.

Пĕрлехи информаци ушкăнĕ çавăн пекех Отарккăри çăкăр пекарнине кĕрсе унти ĕç-хĕлпе паллашрĕ, çăкăр-пĕремĕк пĕçерекенсен ыйтăвĕсене хуравларĕ.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Çамрăк строительсем (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла): Игорь Алексеев, Александр Козлов, Алексей Козлов, Иван Куков, Андрей Шадрин.**

# «Ĕç вырăнĕсем пур, анчах та ĕçлес килмест»

Пенси фончĕн Шупашкар районĕнчи управленийĕн социаллă тӳлев пайĕн ертӳçи Валентина Шогорова ертсе пыракан ушкăн Юнкă ял тăрăхне çитсе килчĕ. Чи малтанах тĕл пулу ял тăрăхĕн администрацийĕнче иртрĕ. Администраци пуçлăхĕ Валерий Фомин вырăнти ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Хыççăн ĕç ушкăнĕ 5 номерлĕ «Рябинушка» ача садне, Юнкă ялĕн Культура çуртне, «Агрико» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна çитрĕ.

Район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн ертӳçи Геннадий Любимов тĕл пулусенче вырма ĕçĕсем епле пынипе паллаштарчĕ. Хăш-пĕр культурăсен уй-хирĕнчи вырма ĕçне вĕçленĕ.

Усă курман çĕрсене пусă çавраçăшне кĕртесси малалла пырать. Кăçал 750 гектар вăя кĕртме пăхнă пулсан, августăн 1-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 244,3 гектар çинче суха ĕçне ирттернĕ.

Кун йĕркинчи черетлĕ ыйту пуçарулăх бюджечĕ пирки пулчĕ. Пирĕн район çак тĕлĕшри программăна хутшăннă май 16 ял тăрăхĕнчи 19 проект конкурс çуйлавĕ витĕр тухнă. Çак йышра Юнкă ял тăрăхĕ те пур. Ял тăрăхĕ ку енĕпе ялăх мар ĕçлесе пырать. Валерий Витальевич малашне те пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ял тăрăхĕн территорине хăтлăлатма хутшăнма чĕнсе каларĕ.

Калаçу пушар хăрушсăрлăхĕ çине куçрĕ. Районта августăн 10-мĕшĕ тĕлне 28 хутчен вут-çулăм алхаснă. Синкерлĕ факт, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан, шел пулин те, районта та ӳснĕ. Ярапайкасси, Мăн Сĕнтĕр, Чуманкасси ял тăрăхĕсенче пушар ытларах тухнă.

Пушар ытларах чухне юсавсăр кăмакаран, электрооборудованипе тĕрĕс усă курмаран, вут-кăварпа асăрхануcăр пулнăран тухать. Г. Любимов тĕл пулăва пухăннисене вут-кăварпа асăрхануллă пулма ыйтрĕ. Çакăн пирки ыттисене те каласан ыттлашши пулмĕ.

В. Фомин «Муркаш – Кăпас» маршрут перевозчикĕ улшăнассине пĕлтерчĕ. Çитес вăхăтра ку тĕлĕшпе район шайĕнче аукцион иртмелле. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ каланă тăрăх, асăннă маршрутпа çӳрекен йышлă маррине шута илсе рейс хисепне пĕчĕклетме пултарĕç. Çавăн пекех коллективсем ытти ыйтăва та сӳтсе яврĕç.

В. Шогорова пенси тытăмĕнчи улшăнусем пирки калакан саккун проектне улшăнусем кĕртес пирки чарăнчĕ. Пенси тытăмĕнчи улшăнусем хыççăн ĕçлемен пенсионерсен индексацийĕн виçи инфляцирен пысăкрах пулмалла. Çапла саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн пенсионерсен вăтам тупăшĕ çитес çул пĕтĕмĕшле 12 пин тенкĕ чухлĕ хушăнмалла.

Ĕçлекенсен йышĕ чакса пынă хушăрах пенси илсе тăракансем нумайланаççĕ. 1970 çулта пĕр пенсионер пуçне ĕçлекен 3,7 условлă çын тивнĕ пулсан, çитес çул ку кăтарту 2-пе танлашĕ.

Ĕç çынни çукки «Агрико» обществăра та аван курăнать. Унăн ертӳçи Валерий Глушаков каланă тăрăх, предприятире тĕп йывăрлăх хатĕр продукцие вырнаçтарасси мар, ĕçлекенсем çукки. Ĕç çыннисем кунта икĕ кун ĕçлеççĕ, икĕ кун канаççĕ, вĕсен вăтам шалăвĕ вун пилĕк пин тенкĕ шайĕнче. Ертӳçĕ çак шалуран самай пысăкрах ĕçлесе илме май туса парать, хальлĕхе ĕç алли çитменни, тĕрĕсрех каласан, ĕçлес килменни ура хурать.

Кунта вешенка тата уплюнкка ӳстереççĕ. Хатĕр продукцин пысăк пайне республика тулашне ăсатаççĕ. Кăмпа пысăк пахалăхлă çимĕç пулнине кура туянакан йышлă. Çавăнпа та ытларах продукци кирли куç-кĕрет, произодство калăпăшне кунта ӳстерсе пыраççĕ.

Вырăнти халăх ĕçлесшĕн марри-не кура В. Глушаков ĕç тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе çынсене Шупашкар хулинчен турттарас кăмăллă.

Çынсем мĕн сăлтавпа ĕçлеменнипе кăсăклантăм, пĕр сăлтавĕ – эрех ĕçни, тепри – ĕçлес килменни иккен. Çавăнпа аякка каймасăр ĕçлесе илес текен эрех ĕçмен çынсене вара кунта ĕçе йышăнма яланах хатĕр. Ĕçлекен, тĕрĕсрех каласан, официаллă ĕçлекен çын йышлансан налук тупăшĕ те ӳсĕ. Ку вара пирĕн социаллă пурнăçпа тӳрремĕнех çыхăннă, çул-йĕр тăвасси тата ытти. Ĕçлекен çын ят-сумĕ чакман-ха.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Пĕлме

# Налук тӳлеме вăхăт

Чăваш Республикин территорийĕнче çынсем 2017 çулшăн налук тӳлемелли пирки уведомленисем илме тытăнчĕç. Налуксене куçман пурлăхшăн, çĕр участокĕшĕн тата транспорт хатĕрĕшĕн тӳлес пулать. Уведомленипе пĕрлех налук тӳлемелли квитанцие те хурса панă.

Налук тӳлекенсем патне уведомленисем заказлă çырупа почта урлă килеççĕ. Енчен те гражданин федераци налук службин «Личный кабинет налогоплательщика для физических лиц» интернет-сервиспа усă курать пулсан, налук уведомленине электрон формăпа кăна илет.

Кăçал налук уведомленийĕн форми тĕлĕшпе тата тӳлевсен расчечĕ енĕпе хăшпĕр улшăну пур. 2017 çултан тытăнса граждансен уйрăм категорийĕ валли налук вычетне пурнăçа кĕртнĕ. Унпа килĕшӳллĕн пĕр çĕр участокĕшĕн тӳлемелли налук виçи 600 тăваткал метр çĕр лаптăкĕн кадастр хакĕ чухлĕ чакать. Тепĕр майлă каласан, участок лаптăкĕ 6 сотăкран иртмест пулсан, уншăн налук тӳлеме тивмест. Ытти лаптăкшăн кăна тӳлемелле. Вычета çăмăллăхпа усă куракан категори çынни пĕр участок тĕлĕшпе кăна тивĕçме пултарать. Ăна хăй суйласа илет. Çăмăллăхпа усă куракансен шутне пенсионерсем, 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инвалидсем, ачаран инвалидсем, Аслă Отечественнăй вăрçă тата çар операцийĕсен ветеранĕсемпе инвалидсем, Совет Союзĕн тата Раççей Геройĕсем т. ыт. кĕреççĕ.

Уйрăм çынсенчен пурлăхшăн 2017 çулшăн илекен налук виçине Чăваш Енре 0,4-пе танлашакан пĕчĕклетӳ коэффициенчĕпе шутласа палăртаççĕ. Иртнĕ çулхи пекех, объектăн кадастр хакне тĕпе хураççĕ.

Граждансем 2018 çулта илекен налук уведомленине татах тепĕр налук – уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук кĕртнĕ. Çакă вăл налук агенчĕсем тытса юлман налук. Ку категорие кĕрекенсен унччен 3-НДФЛ формăпа деклараци памалла пулнă, налука июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр тӳлеме тивнĕ. Çавна май йывăрлăхсем те пулнă.

НДФЛ тата пурлăх налукĕ тӳлемелли вăхăт – 2018 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕччен.

Енчен те гражданинăн налук тӳлемелли пĕтĕмĕшле сумма 100 тенкĕрен иртмест пулсан, ун патне налук уведомленине ярса памаççĕ. Тепĕр çулшăн налук тӳлевĕ хушăнсан тепĕр çулне тӳлев 100 тенкĕрен иртсен тӳлемелле пулать. Уншăн пени хушса памаççĕ.

Енчен те камăн та пулин налук тӳлессипе ыйту пулсан, налук инспекцине кирек хăçан та пыма пулать. Раççей налук службин çĕнĕ "Налоговое уведомление" промостраници те налук тӳлекенсемшĕн усă курма меллĕ.

**В. АНДРЕЕВ,**
**РФ налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕ.**

Пирĕн календарь

# Нимĕçсен çарне çĕнтернĕ

Августăн 20-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1914 çулта вырăс çарĕсем Гумбиннен патĕнчи çапăçура Германи çарне аркатнă.

# Наступлени пуçланă

Августăн 20-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1939 çулта совет çарĕсем Халхин-Гол юхан шывĕ патĕнче Монголи çине тапăнса кĕнĕ Япони çарне хирĕç наступлени пуçланă. Самурайсем 60 пин çынна – пирĕннисенчен 3 хут ытларах çухатнă. Пирĕн çар Монголи пуш хирĕсенче çĕнтерӳ туни Японие СССР çине тапăнса кĕрессинчен тытса тăнă. Çакă Г.К. Жуковăн полководец пултарулăхне лайăх уçса парать.

Православи кĕтесĕ

# Пан улми спасĕ



Августăн 19-мĕшĕнчи уява эпир пан улми спасĕ тенипе пĕлетпĕр. Çак кун – Иисус Христос Турă çĕнелсе улшăннă кун, православи тĕнĕн чи пĕлтерĕшлĕ 12 уявĕнчен пĕри.

Иисус Христос Голгоф тăвĕ çинче хăйне пăталассине пĕлсе, унччен хăйĕн вĕренекенĕсемпе – Петр, Иоанн тата Иаков пулас апостолсемпе – Фавор тăвĕ çине хăпарнă. Вĕренекенĕсем ту патĕнчех сывăрса кайнă. Вăрансан вара вĕсем Иисус Христосăн пичĕ те, çи-пуçĕ те питĕ илемлĕн, хĕвел пек çуталса тăнине тата Вăл Моисейпа Илия пророксемпе калаçнине курнă. Вĕсен куçне курăнман Турă Ашшĕне Святой Сывлăш Турри те çавăнтах пулнă.

Иисус Христос çапла çĕнелсе улшăнни хăйĕн пек шутлакансен шухăшĕсене çĕнетсе улăштарнипе пĕр тан килет. Лайăххи, ырри енне çĕнелсе улшăнма никам та нихăçан та кая юлманнине пĕлтерет.

Çак кун вара чиркӳсенче çын яланах йышлă. Вĕсем пан улмисемпе грушăсене, иçĕм çырлисене «çутатаççĕ». Çапла майпа çынсем Турăн пилне илеççĕ.

Августăн 19-мĕшĕчен пан улми çиме юраманни те çирĕп йăлара пулнă. Спас кунĕнче вара халăх пĕрле савăннă, пĕр-пĕрне пан улмипе сăйланă, çăкăр-булка изделине те пан улмипе усă курса пĕçернĕ. Ĕлĕкрех пуян çынсем пан улми спасĕнче çак çимĕçе лавĕ-лавĕпе туянса чухăн çынсене тата чирлисене валеçсе çитернĕ.

Право пĕлĕвĕ

# Măкăнь те сиен кӳрет

Наркотик сиенлĕ пулнине тепĕр хут асăрхаттарас килет. Халĕ тĕрлĕ çимĕç пиççе пырать, вăл шутра măкăнь чечекĕн вăрри те тулать. Çавна май ăна пухакансем тĕлĕшпе çынсен тимлĕ пулмалла. Вĕсем шăпах та çак вăхăтсенче усă курман пахчасем тăрăх çӳреме пултараççĕ.

Ун йышши факт район территорийĕнче пулнă. Ильинка ял тăрăхĕнчи пĕр çамрăк арçынна пĕрре кăна мар судпа айăпланă. Вăл ку тĕлĕшри парăмсене татса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Ку хутĕнче те вăл черетлĕ хут йĕркене пăснă. Пĕр пахчара măкăнь чечекне татса пухнă. Типĕтнĕ чĕр тавар виçи 156,5 грамм тайнă. Унран вăл черетлĕ «апатлану» хатĕрленĕ, анчах та çакна тума ĕлкĕреймен, полици ĕçченĕсем ун патне çитнĕ. Чĕр тавара туртса иличчен арçын măкăне хăйĕн хуçалăхĕнче упранă. Çапла арçын РФ УК 228 статйинче палăртнă йĕркене пăснă. Çакна вăл туллин йышăннă, пулни-иртнишĕн ӳкĕннĕ. Район сучĕ ун тĕлĕшпе çирĕп приговор вуларĕ.

Саккуна пăснă çын каланă тăрăх, çак факт пуличчен вăл пĕр çул маларах çак усал хутăша ăша хывса пăхнă. Çавăн хыççăн ăна учета илнĕ, туртăм ӳснĕ, анчах та сиплев иртермен.

Малашне çакăн пек фактсем район территорийĕнче пулмасса шанас килет, енчен те çакăн пек «сунарçăсем» пахча тăрăх утнине асăрхасан çийĕнчех полици ĕçченĕсем патне шăнкăравламалла.

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ.**

Асăрханулăх

# Каллех улталаннă

Ултавлă мелпе укçа-тенкĕ ĕçлесе илекенсем çĕнĕрен те çĕнĕ мел шыраса тупаççĕ. Район территорийĕнче те ултавлă ĕç тăвакан йышланса пыни курăнать, çакна çынсем РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайне шăнкăравласа пĕлтерни те çирĕплетет. Ултавçă серепине вара ытларах чухне ватă çынсем, çур сăмахран ĕненекенсем, тепĕр чухне çамрăккисем те лекеççĕ.

Ултавлă ĕç тĕрлĕрен. Çынсенчен укçа шахвăртса илес тесе кенсем хушма хуçалăхсене газ тухнине систерекен оборудовани лартса пама шантараççĕ. Вĕсем пӳрт-çурта кĕме именсе тăмаççĕ. Çынсем вара документсене, вĕсен ĕç вырăнне ыйтма та манаççĕ е пĕлмеççĕ. Ултавçăсем сĕнекен тавар хамăр патринчен самай хаклă, вĕсем оборудовани пысăк хакпа лартса парса хăвараççĕ.

Тĕслĕх вырăнне пĕр факт илсе кăтартам. Ку ĕç нумаях пулмасть Катькас ял тăрăхĕнче пулса иртнĕ. Кăнтăр вăхăтĕнче иккĕн ватă çыннăн хуçалăхĕн котельнăйне кĕнĕ. Кинемее газ тухнине систерекен оборудовани лартма ӳкĕте кĕртнĕ. Çапла икĕ çын укçа ĕçлесе илнĕ. Халĕ вара кинемей ултавçăсене тупма тата укçана каялла тавăрма полици сотрудникĕсенчен пулăшу ыйтать.

Юлашки вăхăтра чылайăшĕ хушма хуçалăхра электросчетчиксем улăштарать. Çавна май ултавçăсем ку енĕпе те услам тума тăрăшаççĕ. Çынсем унччен никампа калаçса кăсăкланмасăрах вĕсене пĕчĕк мар укçа кăларса тыттараççĕ. Тĕрĕссипе вара счетчик тата ĕç хакĕ самай пĕчĕк.

Пластик чӳречесем улăштарасси анлă сарăлса пынă май ултавçăсем вăхăт иртнĕçемĕн ăна тĕрĕслеме тата ку тĕлĕшри ытти ĕçпе пулăшма шантараççĕ. Шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, хитре кантăк витĕр пăхса ларас текенсен кĕçĕнне 30 пин тенкĕлĕх çӳхетнĕ факт та район территорийĕнче пулнă.

Çӳлерех асăннă ĕçсене пурнăçлакансем потребительпе килĕшӳ тума тивĕç. Анчах та вĕсем çынсене суя хутсем çине кăна алă пустараççĕ иккен. Саккунлă килĕшӳ çинче пичет, алă пусни, предприяти-организаци реквизичĕсем пулмалла, пĕр экземплярĕ потребительте юлмалла.

Шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем çынсене тимлĕ пулмалли пирки тепĕр хут аса илтереççĕ. Палламан-пĕлмен çынсене хуçалăха кĕртмелле мар. Енчен те вĕсем хăйсене социаллă е ЖКХ сферин ĕçченĕсем тесе пĕлтереççĕ пулсан, документсем ыйтмалла, хушамат е телефон номерĕ пурри çине тимлĕх уйăрмалла. Ун пек чухне автомашина номерне, тĕсне, маркине астуса юлма тăрăшмалла.

Çурт-йĕр çыннăн харпăрлăхĕ шутланать, çавăнпа та унта хуçана ирĕксĕрлесе вăйпа кĕме юрамасть. Харпăрлăха РФ Конституцийĕ сыхлать, çавăн пекех РФ Уголовлă Кодексра ку тĕлĕшпе ятарлă статья пăхса хунă. Çавăнпа та йĕркене пăсакансем пирки çийĕнчех шалти ĕçсен пайне пĕлтермелле.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Саккунлăх

# Тĕрĕс çул суйлани кăна йăнăш утăмран хăтарĕ

Çак кунсенче Раççей Федерацийĕн УИИ УФСИН Чăваш Енти управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи филиалĕн ĕçченĕсем «Скажи рецидиву – нет» право сыхлавĕ тĕлĕшĕнчи операци шайĕнчи мероприятие ирттерчĕç. Калаçу уголовлă айăплава кĕртнĕ, анчах та обществăран уйăрман, инспекцинче учетра тăракан çынсемпе пулчĕ. Тĕл пулăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова, район прокурорĕн çумĕ Юрий Семенов тата ыттисем хутшăнчĕç. Мероприятие филиал ертӳçин çумĕ Ольга Егорова ертсе пычĕ, çавăн пекех вăл «После приговора» видеороликпа паллаштарчĕ.

Лилия Тарасова тĕл пулăва пухăннисене тĕрĕс çул çине тăма чĕнсе каларĕ. Çемье, ашшĕлĕхпе амăшлăх пĕлтерĕшсене ăнланса илсе йĕркеллĕ пурнăçа таврăнма хистерĕ. Çемье вара лайăххине начаррипчен уйăрма пĕлекен çынна тĕксе ямастех.

Чи пĕлтерĕшли – çыннăн хăйĕн юсанас туртăмĕ пулмалла. Пурнăçра ытларах ырă енсене курма, обществăлла ĕçе явăçма тăрăшмалла. Право йĕркине пăхăнса пурăнни кăна ултавлă çул çине черетлĕ хут тăрассинчен сыхлĕ. Тусу камне кала та эсĕ камне калăп, теççĕ халăхра. Тĕрĕс çултан пăрăннă юлташ ырă ĕç патне илсе пырасси иккĕлентерет. Çавăнпа та хăвна ăнланакан, пурнăçа хаклакан çын патне туртăнни тĕрĕс çул çине тăрассинче пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ю. Семенов рецидив мĕн патне илсе çитерме пултарасси çинче чарăнчĕ.

Тĕп больницăн нарколог врачĕ А. Строганов ăнлантарни те тĕл пулăва хутшăннисемшĕн усăллă пулмалла, енчен те усал йăларан, вăл шутра эрехрен вăхăтра уйрăлсан. Шел пулин те, чылай преступлени шăпах та ӳсĕрле пулса пырать, çемьери харкашăва та эрех пуçарать, чылай чухне синкерлĕх патне илсе çитерет. А. Строганов больница пулăшу кирлине яланах ăнланма хатĕррине палăртрĕ, вăхăтра сиплев ирттерме ыйтни те тĕрĕс çул çине тăма пулăшĕ.

Психолог сĕнĕвĕпе те усă курма пĕлмелле. Йывăрлăхра унпа чуна уçса калаçма именмелле мар, пусăрăнчăк кăмăл-туйăма эрехпе пусарни вара черетлĕ хут преступлени тăвасси патне кăна илсе çитерет. Çакăн çинче Е. Березина психолог чарăнчĕ. «Йăлтах – сирĕн алăра», – терĕ вăл.

Тĕп библиотека системин ертӳçи И. Николаева усал йăласенчен уйрăлма пулăшакан мелсем çинче чарăнчĕ. Учетра тăракансене саккуна пăсма хистекен, илĕртекен туйăмсене сивлесе кĕнеке, хаçат-журнал вулас туртăма аталантарма чĕнсе каларĕ. Ку енĕпе библиотека фончĕ питех те пуян, библиотекарьсем те яланах пулăшма хатĕр. Çавăн пекех Ирина Алексеевна социаллă право услугисен переченĕпе паллаштарчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Полици хроникинчен

## Çĕр вăрçтарать, калаçтарать

Ярославка ял тăрăхĕнчи икĕ хĕрарăм хушшинче хирĕçӳ тухнă. Мĕн пирки тетĕр-и? Çĕр пирки! Асатте-асаннесем вара çĕр пирки харкашма, çĕр пайлама хушман. Çĕр пурне валли те çитет теççĕ халăхра. Çулĕпе çамрăках мар хĕрарăм полицие шăнкăравланă тăрăх, унăн çĕрне пускилĕ çавăрса илесшĕн имĕш, çав тĕллевпех çĕр чиккисене палăртакан шалчасене кăларса ывăтнă иккен. Çавăнпа та вăл тĕрĕслĕх шыраса пулăшу ыйтать.

## Пыл çиес килнĕ

Вĕлле хурчĕпе ĕçлеме юратман çын пур та, пыл çиме кăмăлламанни çуках пулĕ. Мăн Сĕнтĕрти пĕр хуçалăх хуралтинчи пыл тата карас рамисене куç хывакан тупăннă. Рамăсене вĕллене хунă пулнă. Кил хуçи вĕсене вăхăтлăх управа хăварнă та тепĕр вăхăтран кĕрсе пăхсан хăйĕн пурлăхне курайман. Çапла та пулать иккен, вăл е ку япалана вăхăтлăх та куçран вĕçертмелли çук, кашни алăк çине пысăк çăра çакмалли кăна юлать.

## Урама тухма та хăрамалла-и?

Çатракасси ял тăрăхĕнчи пĕр ялти арçынран питех те тĕлĕнмелле. Ăна маларах та судпа айăпланă, саккуна пăхăнса пурăнмаллине те асăрхаттарнă. Кунта ял-йышпа килĕштермелли те кĕрет ĕнтĕ. Арçын вара хăйĕн пӳрчĕ патĕнче хĕрарăма киревсĕр сăмахсемпе кӳрентернĕ, çакăнпа кăна çырлахман-ха вăл, ăна хĕнеме те имемнен.

## Ют пурлăх илĕртнĕ

Июль уйăхĕнче Катькас ял тăрăхĕнчи пĕр ялти арçын ют пурлăхпа киленме шухăшланă. Çăра уçсипе тупса çыннăн харпăрлăхĕнчи сарайне кĕнĕ. Мĕн патне кĕрессине маларахах палăртнă пулĕ, унта хĕрлĕ тĕслĕ «ИЖ планета – 5» маркăллă мотоцикл ларнă. Унпа вăл катаччи чупма тухса кайнă. Ун пеккисене вара полици ĕçченĕсем аякка тартмаççĕ çав, пурпĕрех вĕсене пулни-иртни пирки тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартма тивет, айăплав та çирĕп пулма пултарать.

## Права çук – килте лар

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан арçын кӳршĕ яла автомашина рулĕ умне ларса çула тухнă, хăй маларах эрех ĕçнине шута илмен. Унăн вара автотранспортпа катаччи чупма пачах та юраман, мĕншĕн тесен ку тĕлĕшпе ирĕк те пулман. Автотранспорт правинчен хăтарнă арçынна маларах вăтăр пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăннă, çавăн пекех унăн пĕр çул та ултă уйăх руль умне ларма ирĕк пулман. Çапла вара саккуна сĕмсĕррĕн пăснă çын черетлĕ хут айăплав ĕçлесе илчĕ.

## Тискерлĕх

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи пĕр ялта тискерле ĕç пулса иртнĕ. Арăмĕпе упăшки хушшинче хирĕçӳ тухнă. Арăмĕ лăплланма ыйтсан та арçын ниепле те чарăнма пултарайман, хĕрарăма хĕненĕ, кĕленче савăт ванчăкĕпе касса нушалантарнă. Ку чăн-чăн тискерлĕх мар-и?

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Сывлăх

# Арçын сывлăхĕ тата спорт

**Нумаях пулмасть Шупашкарта ĕçлĕ çул çÿревпе Раççей Сывлăха сыхлас ĕç министерствин репродуктивлă сывлăх енĕпе ĕçлекен тĕп специалисчĕ, урологин тата интервенци радиологийĕн Н.А. Лопаткин ячĕллĕ наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ Олег АПОЛИХИН пулнăччĕ. Икĕ кун хушшинче вăл «Охрана репродуктивного здоровья у мужчин и активное социальное долголетие в Чувашской Республике» программăна пурнăçлассин ыйтăвĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа сÿтсе яврĕ, çак ыйтупах хула медицина пĕрлĕхĕ умĕнче тухса каларĕ, «Университет здоровья» проект шайĕнче çынсем валли уçă лекци ирттерчĕ. Çавăн пекех телепрограммăна хутшăнчĕ тата «Советская Чувашия» хаçата интервью пачĕ.**

**– Олег Иванович, эсир епле çамрăк та хитре, йăрăс пулнине курнă май, чи малтанах çавна ыйтса пĕлес килет: арçын çулсем иртнĕ май хăйĕн сывлăхне ан çухаттăр тесен, ăна спортăн мĕнле тĕсне тата рациона мĕнле продуктсем кĕртме сĕннĕ пулăттăр?**

– Ытарлăрах каласан, арçын вăл – спринтер, кĕске дистанцие чупакан, хĕрарăм вара – стайер, вăрăм дистанцие парăнтаракан. Çавăнпа та арçын (паллă ĕнтĕ, хĕрарăм та) спортпа туслă пулни пĕлтерĕшлĕ. Çапах та спорт арçынăн кирлĕрех пулса тăрать. Çакă унăн сăнпичĕ çине те лайăх витĕм кÿрет. Пĕлтерĕшлĕрехххи вара – унăн характерне йĕркелеме пулăшать.

Арçынăн анаэроблă тренировка пысăк усăллă. Кусем вĕсем сывлама вăхăтлăх чарăнмалли хăнăхтарусем. Шыв айĕн ишни лайăх. Çын чăмать те шыв айĕн пĕр тапхăр ишет. Кайран çиеле тухса кислород нумай сывласа илет, каллех чăмать. Çапла туни тестостерон шайне чылай ÿстерет.

Культуристсене пăхăр-ха. Вĕсем яланах хĕвел çинче. Ультрафиолет та арçынăн тестостеронне ÿстерме пулăшать. Çавăнпа та хăнăхтарусене хĕвел çинче туни аван. Çакна хĕвел айĕнче хĕртĕнсе выртнипе ан пăтраштарăр.

Арçынăн психологи ауринче пулни кирлĕ. Калăпăр, вăрман тăрăх уçăлса çÿренĕ май стресс тата хусканусăрлăх тиевĕ илĕнет.

Кунпа пĕрлех арçыннăн юратакан хĕрарăм пулни те пĕлтерĕшлĕ.

Апат-çимĕç продукчĕсен пирки калас пулсан, хальхи вăхăтра кетон диети пирки нумай калаçаççĕ. (Ку вăл апатлану рационĕнче углеводсене çусемпе ылмаштарни. – **Авт.**) Çапла, унăн усси çук мар. Хăш чухне илтме пулать: «Эпĕ çак диетăна тытса пыратăп, кашни кун чăх какайĕ çиетĕп». Анчах та хальхи вăхăтра чăх-чĕп ĕрчетессин технологийĕнче ÿсĕм стимуляторĕсемпе анлă усă кураççĕ. Енчен те эпир кун пек какая тăтăш çиме тытăнатпăр пулсан, организма ытлашши гормонсем тата антибиотиксем пухатпăр. Усă вырăнне организма сăтăр кăна тăватпăр. Сысна ашĕ те çак категорие кĕрет.

Ман шутпа сурăх ашне туса илесси кăна хальхи вăхăтра хăвăртлату процесĕпе çыхăнман.

**– Сирĕн коллегăсем каланă тăрăх, арçыннăн сывлăхĕ 60 процент таран ачалăхпа çыхăннă. Хĕрарăмăн та унран каях мар ĕнтĕ. Хĕр ачасене мĕн пĕчĕкрен асăрхаттараççĕ: сивĕ шыва ан кĕр, чул çине ан лар – шăнатăн, çитĕнсен вара ача амăшĕ пулаймастăн. Арçын ачасем валли те кун пек сĕнÿсем пур-и?**

– Ачаранах спортпа туслă пулмалла. Акă ман пата арçын пырать те каласа парать: «Простатит анăратса çитерчĕ – хырăм айĕ ыратать, потенци тĕлĕшпе те йĕркеллех мар. Сивĕ тенкел çине лартăм пуль», – тет. Ыйтатăп: «Мунчана çÿретĕр-и?». «Çÿретĕп, – тет вăл. – Çын мучалипе усă курман, хамăннипе кăна». Çапла вара ăна ăнлантаратăп: «Еçĕ мучалара та, сивĕ тенкелре те мар. Простатитăн тĕп сăлтавĕ вăл – ар çыхăнăвĕ урлă сарălакан чир-чĕр». Вĕсене пурне те тÿрех тупса палăртма йывăр, анчах та пурте çавăн патне илсе çитереççĕ те. Апла пулсан нравственноç, мораль хаклăлăхĕсем пирки манма юрамасть. Йĕркеллĕ пурнăçпа пурăнас пулать, хăвăр мăшăрпа е хăвăрпа пĕрле пурăнакан хĕрарăмпа пулăр. Ун чухне сирĕншĕн простатит та хăрушă мар.

**– Олег Иванович, мунча пирки асăнтăр пулсан, çавна ыйтса пĕлнĕ пулăттăм. Халĕ модăллă шутланакан вĕри сауна арçын çине кĕске вăхăтлăх контрацептивлă витĕм кÿрет тени чăнлăхпа çыхăннă-и?**

– Калăпăр, арçынна вĕри кăмака çинех хăпартса лартатăр пулсан, тен, çур сехет хушшинче сперматозоидсен активлăхĕ чакать пулĕ. Арçынни хăй пачах çунса каймасан.

Ку темăна урăх енчен сÿтсе явар-ха. Хăшĕсем çапла ыйтаççĕ: «Арçын ачана подгузник тăхантартнăччĕ, вĕсемпе ăшă. Ăшă вара арçыннăн ар функцийĕсем çине япăх витĕм кÿрет-им?» Тепĕр майлă калас пулсан, эпир пуçа çухатнă хыççăн çÿç пирки кулянма тытăнатпăр. Пăхăр-ха, ачасем хушшинче самăрăлса кайнисем сахал мар. Хĕр ачашăн çакă хăрушах мар тейĕпĕр, арçын ачашăн вара...

Вĕсенче арçăннăн гендерлăхĕ пăсăлать, ар органĕ япăх аталанать. Арçыннăн çу пухăнса пыни антиандроген пекех. Физиологи кастрацийĕ патне илсе пырать. Арçын хĕрарăм паллисене йышăнма пуçлать – кăкăрĕ çитĕнет, пĕççисем шыçмакланаççĕ. Арçын хăйне тыткаласси те улшăнать. Кун пек арçынсене эпир час-часах пуху-канашлусенче куратпăр. Ларать – хырăмĕ малалла, куçĕсем тĕссĕр. Кислород кăшт чакрĕ пулсан, пулчĕ вара, сывăрса кайрĕ, харлаттарать. Ытларах чухне кун пек çын хăйне хăй пăхса тăмасть, пушакĕ таса мар, брюкине якатман. Çакă униăн пурпĕрех. Унăн депрессиллĕ кăмăл-туйăм, никама та килĕшес туйăм çук, унăн пĕтĕмпех япăх. Çакă коллективăн, обществăн социаллă туйăмĕ çине те витĕм кÿрет. Çавăнпа та арçын сывлăхĕ – кашни çыннăн харпăр хăйне мĕнле туйни кăна мар, социаллă климата тивĕçтерессин пĕлтерĕшлĕ задачи те.

**– Çак парадокса эсир епле ăнлантарса панă пулăттăр. Акă пĕр мăшăр – пĕр-пĕрне юратаççĕ, сывлăхлă, анчах та вĕсен ача çук. Тепĕр мăшăр – ялан тенĕ пекех çурма ÿсĕр, ăçта килчĕ унта – шыв кÿлленчĕкĕнче те, юр çинче те йăваланса çÿреççĕ. Вĕсем мĕнле пурнăçпа пурăннине пăхас пулсан вара ачисем ытлашшипех темелле.**

– Кунта тĕрлĕ фактор пулма пултарать, тарăн тишкерÿ кирлĕ. Тĕслĕхсен 20 процентĕнче ача пулманни идиопати пулăмĕпе çыхăннă. (Кун пек чухне мăшăрăн ача пулманнин сăлтавне тупса палăртма май килмест. – **Авт.**) Кунсăр пуçне тата – фертиллĕх. Кун пек чухне хĕрарăмăн шăпах çав арçынпа ниепле те çие юлмасть. Тепĕринпе вара – çăмăллăнах. Çакă арçын пĕчĕк чухне чирленипе те çыхăннă пулма пултарать: хĕрлĕхен, хăлха парĕсен шыççи.

**– Телегони пирки эсир мĕн шухăшлатăр? Ку вăл пуçласа вĕçне çитичченех çуя наука. Е унта та обществăшăн мĕн те пулин кирли пур-и?**

– Темиçе уйăх каялла сирĕн министр (Чăваш Ен сывлăха сыхлас ĕç министрĕ Владимир Викторов – **Авт.**) çапла пĕтĕмлетÿ турĕ: «Енчен те хĕрарăмăн çичĕ арçын пулнă пулсан», вăл Библири пек каларĕ, унăн ача çуратма пултарасси чакать е ача пачах та пулмасть. Хыççăнах ку темăпа дискуссисем пуçланчĕç. Кам çакна хирĕçлеме хăтланать, вĕсем çакна çирĕплетеççĕ – кун пек тĕпчевсене, этика ăнлавĕсене шута илес пулсан, никам та ирттермен. Анчах та кун пек тĕпчевсем вара пур. Вĕсене вылăх ĕрчетекен çынсем туса ирттернĕ. Тĕрлĕрен пăхса-асăрхаса пынисем те çук мар.

Енчен те пур сăлтавсене те шута илес пулсан, 75 процентĕнче хĕрарăмăн çие юлманни пĕрремĕш мар, иккĕмĕш хутĕнче. Апла пулсан çакă пурнăç йĕркине мĕнле тытса пынипе çыхăннă. Кусем вĕсем ар çыхăнăвĕ урлă сарăлакан чирчĕр те, тĕрĕс мар апатлану та, гиподинами те, токсикăлла япаласен витĕмĕ те.

**– Эсир хăвăрăн пĕр интервьюра çапла каланăччĕ: «Демографсем шутласа пăхнă тăрăх, Раççейшăн 10 млн çын çухатни пирĕн наци хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе проблемăллă. Эпир çĕршыва тытса тăраймăпăр». Ку сăмахсене эсир икĕ çул каялла каланăччĕ. Çакна эсир халĕ тепĕр хут çирĕплетме пултаратăр-и?**

– Çапла. Шел пулин те, негативлă япаласем пирĕн çĕршывра пур-ха, вĕсене чарса лартайман. Май уйăхĕнчи указсем те лару-тăрăва лайăхлатассипе çыхăнăскерсемех. Ача çуралассин коэффициентне ÿстересси, арçын сывлăхĕ тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалли пирки каланă. Мĕншĕн тесен арçынсем çĕршывăн тĕп ĕç резервĕ пулса тăраççĕ вĕт-ха. Наци хăрушсăрлăхĕ, çар служби тĕлĕшпе те арçынсем – çĕршыв тĕрекĕ. Çав вăхăтрах пирĕн патра ĕç ÿсĕмĕнчи арçынсен вилеслĕх шайĕ Европăра чи пысăккисенчен пĕри. Ытларахăшĕ 33 – 56 çулта çĕре кĕрет.

**– Эсир – тĕнче шайĕнчи ученăй. Тархасшăн, демографи шайĕпе малти вичĕ вырăна йышăнакан çĕршывсене тата Раççей регионĕсене асăнса хăварăр-ха?**

– Çĕршывсем хушшинче чи малти – Инди. Хыççăн – Китай тата Бангладеш. Нигерире ÿсĕм пысăкки палăрать. Пирĕн регионсене илес пулсан, кусем вĕсем – Çурçĕр Кавказ республикисем. Сирĕнпе юнашаррисем – Тутар, Пушкăрт Республикисем.

**– Интернет даннăйĕсене илес пулсан, арçынсен сывлăхне сыхлассин проектне Раççейри 13 регионта пурнăçа кĕртнĕ. Чăваш Республики те вĕсен шутĕнче е вăл 14-мĕш пулса тăчĕ?**

– Вăл 14-мĕш уйрăм регион пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен Чăваш Енре, ытти регионпа танлаштарсан, лару-тăрăва лайăхлатассине пуçласа комплекслă йĕркеленĕ. Тема çăмăллиех мар вĕт-ха. Вăл арçынсен сывлăхĕпе тата урологие кăна çыхăнман. Пирĕн суйласа илес пулать – е эпир чирпе кĕрешес, ăна çĕнтерес тетпĕр, е пирĕн тĕллев анлăрах, чирлес маррипе çыхăнни. Хальлĕхе вара эпир шала кайнă чирсене сиплетпĕр. Çапла вара эпир тĕрĕссипе чирлессин шайне ÿстерсе пыратпăр. Сывлăх сыхлавĕн хальхи системишĕн çакă лайăх, мĕншĕн тесен чиршĕн тÿлеççĕ. Тĕрĕссипе вара сывлăххшăн тÿлеме тивĕç, чирлекенсен шучĕ чакса пынишĕн.

Çакăн пек программăна эпир Раççей Федерацийĕнче пуçласа Чăваш Енре кăтартасшăн. Урологи, арçынсен сывлăхĕ урлă. Вăл вара пуçламăш тапхăрти диагностикăпа е хăй вăхăтĕнчи диспансеризаципе кăна çыхăнман. Ытларах чухне медицинăпа пачах та çыхăнман. Кусем вĕсем – шкулти апатлану та, лидерсен – обществăри паллă тата хисеплĕ çынсен тĕслĕхĕпе сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси те. Ку вăл – физкультура массăлăхне ÿстересси, картишсенчи спорт площадкисене тăвасси.

«Советская Чувашия» хаçат материалĕсем тăрăх.

**Сăмах май.** ***Чăваш Енре «Охрана репродуктивного здоровья у мужчин и активное социальное долголетие в Чувашской Республике» программăна пурнăçа кĕртме республика бюджетĕнчен 46 млн тенкĕ уйăрĕç.***

Сад-пахчаçăн уйăх календарĕ

# Кĕрхи ĕçсем вăхăт шутлаççĕ

Çапла каланă кĕр кунĕсенчи ĕçсене вăхăтра пурнăçлама сĕнсе аслă асаттесем. Ку сăмахсем хыçĕнче кĕрхи культурăсем акса-лартса хăварасси те вăйра тăрать. Пушаннă йăрансем пахчаçăран кĕрхи тимлĕх кĕтеççĕ. Çак ĕçсене вара паянах хатĕрленмелле. Кая юлсан, каю шăтать. Апла ан пултăр тесе эпир сире уйăх календарĕпе паллашма сĕнетпĕр.

**Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕ.** Пахчаçăшăн тата чечек ăстишĕн нумай çул ÿсекен чечексене – пионсене, ириссене, ландышсене, примуласене т. ыт. те – пайлама тата куçарса лартма меллĕ вăхăт. Пахча çимĕçе улма-çырлана пуçтарса тирпейлеме те юрать. Улмуççипе çырла тĕмсем лартма вырăн хатĕрлĕр. Эмел курăкĕсен чечекĕсемпе çулçисене пуçтарăр. Хура кĕркунне симĕсле çиме кресс-салат, шпинат акма юрать. Пахча çимĕçе хĕлле упрамалли хранилищĕсене тĕрĕслесе тухăр. Çĕр çырли лартма çĕнĕ плантацисем хатĕрлĕр.

**Çурла уйăхĕн 19 – 20-мĕшĕсем.** Сельдерее кулапăр. Сĕтел çинче хура кĕркунне симĕсле çиме кресс-салат, шпинат пултăр тесен, вĕсене çак кунсенче акма кая юлман. Чечексене минераллă удобренипе апатлантарăр. Теплицăри хăяра бактериллĕ чир-чĕртен тата кăмпа чирĕнчен хÿтĕлессипе ĕçлĕр. Хĕл валли пухнă пахча çимĕçе çийĕнчех тирпейлĕр. Улмуççипе çырла тĕмсем лартма вырăн хатĕрлеме вăхăт çитрĕ.

**Çурла уйăхĕн 21 – 22-мĕшĕсем.** Кĕрхи культурăсем акма-лартма йăрансем кăпкалатса хатĕрлĕр. Йывăççемпе тĕмсем айне тислĕк сапаласа хурăр. Йывăççемпе тĕмсене лартни тата куçарса лартни усăллă. Пахча çимĕçе тăварлама тата консервăлама лайăх. Çитес çулхи илемшĕн тăрăшса хатĕр йăрансем çине тюльпан суханĕсене лартни вырăнлă.

**Çурла уйăхĕн 23 – 25-мĕшĕсем.** Эмел курăкĕсен чечекĕсемпе çулçисене, çимĕçĕсене пухма тăрăшăр. Хăвăрт тирпейлесе нумай вăхăт упрамалли пахча çимĕçе пухăр. Сад-пахчари ÿсен-тăрана шăварма тата фосфорпа кали удобренийĕпе апатлантарма юрать. Йăрансене кăпкалатăр. Пахча çимĕç пухассипе малалла ĕçлĕр. Вĕсем тăварласан та халĕ лайăх упранаççĕ.

**Çурла уйăхĕн 26 – 27-мĕшĕсем.** Кĕркунне симĕсле çиме теплицăра та, уçă вырăнта та кресс-салат, шпинат пултăр тесен, вĕсене çак кунсенче те акма тăрăшăр. Хăмла çырли, хурлăхан, крыжовник пуçтарса илнĕ хыççăн çав тĕмĕсен кăçал çимĕç панă тата аманнă тураттисене иртсе тĕмсене çамрăклатăр. Пахчана тислĕк тăкăр. Сырлан, хура пилешпе хĕрлĕ пилеш татмалла, тирпейлесе консервăламалла.

**Çурла уйăхĕн 28-мĕшĕ.** Йăрансене шăварма тата шĕвеккĕн апатлантарма юрăхсăр кун. Çĕре кăпкалатса йăрансем хатĕрлĕр. Улмуççи тураттисене тĕкĕленĕ тĕкĕсене тĕрĕслесе тухăр. Нумай вăхăт упрамалли пахча çимĕçе пухма меллĕ вăхăт. Ку вăхăтра лартнă хунавсен лайăх тымарланаççĕ.

**Çурла уйăхĕн 29 – 30-мĕшĕсем.** Йывăç-тĕмсемпе ытти культурăсене лартма тата куçарса лартма тăхтăр. Йăрансем хатĕрлĕр. Эмел курăкĕсен чечекĕсемпе çулçисене, çимĕçĕсене пухма тăрăшăр. Çĕр улми, кишĕр, кăшман кăларса упрама хунă май пушаннă йăрансене минераллă удобрени хывăр, извес çăнăхĕ сапăр.

**Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕ.** Çимĕçрен пушаннă йăрансем çинчи çум курăкне иртĕр. Çĕр ĕçĕсем тăвăр. Тислĕк хывса йăрансене кăпкалатăр. Кĕрхи пахча çимĕçе пуçтарăр, упрама хурăр. Сырлан, хура пилешпе хĕрлĕ пилеш татса консервăлама меллĕ пулнине ан манăр. Сухан тымарлă чечексене лартса хăварăр. Пухнă пахча çимĕçе хĕл каçа упрама меллĕ савăтсем хатĕрлĕр. Сырлан, хура пилешпе хĕрлĕ пилеш татассипе кая ан юлăр тата консервăлăр.

Пĕлтерӳсем/Объявления

## ВНИМАНИЕ! ИСТОЧНИК ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ!

К сведению руководителей промышленных предприятий, строительно-монтажных организаций, колхозов, совхозов, фермерских и арендных хозяйств, других землепользователей и частных лиц.

**Чебоксарское ЛПУМГ – филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» уведомляет: по землям Моргаушского района** проходят газопроводы-отводы высокого давления (от 55 до 75 атмосфер), обеспечивающие потребности промышленных предприятий и населения района в природном газе, являющиеся **объектами повышенной опасности!**

Строительными нормами и правилами СНиП III-Д.10-62 (Актуализированный СНиП 2.05.06-85) установлены **ЗОНЫ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ** от осей газопроводов и границ газораспределительных станций (далее – ГРС) до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог. З**оны минимальных расстояний составляют от 100 до 350 метров** в зависимости от диаметра газопровода, степени ответственности объектов, указанных на знаках закрепления газопроводов и служат **для обеспечения безопасности этих объектов.**

На указанных земельных участках **НЕ ДОПУСКАЕТСЯ строительство каких бы то ни было зданий, строений и сооружений** в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения (Земельный Кодекс РФ № 136-ФЗ от 25.10.2012г. ст.90 п.6).

В соответствии с требованиями Федерального Закона от 31.03.1999г. № 69-ФЗ ст. 32 здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, **ПОДЛЕЖАТ СНОСУ за счет средств юридических и физических лиц, допустивших нарушение.**

**Приватизация земель в зоне минимально допустимых расстояний НЕ ДОПУСКАЕТСЯ** без согласования с организацией, эксплуатирующей газопровод и ГРС – Чебоксарского ЛПУМГ – филиалом ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

Кроме того, Правилами охраны магистральных трубопроводов, утвержденными Постановлением Правительства и Госгортехнадзора РФ (№ 9 от 22 апреля 1992 года), в целях исключения возможных повреждений газопроводов, установлены **ОХРАННЫЕ ЗОНЫ** газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении **на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС.**

**ЛЮБЫЕ РАБОТЫ в охранных зонах без письменного разрешения** Чебоксарского ЛПУМГ – филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород», эксплуатирующего газопроводы и ГРС, **ЗАПРЕЩЕНЫ**.

В настоящее время **УЧАСТИЛИСЬ СЛУЧАИ ПОВРЕЖДЕНИЯ газопроводов** строительной техникой организаций, выполняющих земляные работы в охранных зонах газопроводов без соответствующего разрешения, в том числе электрических кабелей, линий телерадиокоммуникаций, водопроводов, нефтепроводов и т.д.

Механическое повреждение газопровода высокого давления может привести к **НЕГАТИВНЫМ ПОСЛЕДСТВИЯМ – взрыв большой разрушительной силы, человеческие жертвы, материальные потери и прекращение газоснабжения потребителей.**

**Виновные** в нарушении Правил охраны магистральных трубопроводов и СНиП **подвергаются уголовному преследованию** по ст. 269 УК РФ.

